Материал представлен из коллекции электронной библиотеки «Писатели Чувашии – детям» – **pchd21.ru**
Электронная библиотека создана Чувашской республиканской детско-юношеской библиотекой – **www.rdub21.ru** – на средства гранта Президента Российской Федерации для поддержки творческих проектов общенационального значения в области культуры и искусства

**Автор: Лев Кадкин**

**Книга: Воробьиный юг**

## Рассказ: Çĕрçи кăнтăрĕ

Çĕрçи кăнтăра мĕншĕн кайманнине пĕлетĕр-и эсир? Эппин итлĕр. Кĕркунне, кун кĕскелсен, каçсерен аслă пухăва пуçтарăнаççĕ. Çитет пире мăнтăрланса та хăмăш хушшинче пурăнса теççĕ ахăртнех. Кĕçех сивĕ çилсем килĕç, хура çĕре шурă мамăкпа витĕç, тăхлан пек йывăр пĕлĕтсем сарă хĕвеле хупласа хурĕç, вара унăн ăшши пирĕн пата çитейми пулĕ. Юхан шывсемпе кӳлĕсем хулăн пăрпа витĕнĕç, шурă уйсенче пире вали апат-çимĕç юлмĕ. Ирĕксĕрех ăшă çĕре кайма тивет. Аслă несĕлĕрсем çав йĕркепе пурăннă, пире те çапла пурăнма эртелне пĕрлешмелле, кăнтăр çулне лайăх пĕлекене ертӳçĕ пулма суйламалла, вара тапранса тухмалла. Лере унта ăшши те, апат-çимĕçĕ те çителĕклĕ. Хĕл иртиччен унта пурăнăпăр, вăй-хал пухăпăр, çуркунне Тăван çĕршыва таврăнăпăр. Çапла вĕрентнĕ аслă ăрусем.

Çак пухăва çĕрçисем те пухăннă. Мĕн тăвăн, вĕсем те кайăксем-çке-ха. Ыттисем мĕн каланине итлесе ларнă-ларнă та вĕсем те ертӳçĕ суйлама пикеннĕ. Кашни çĕрçи хăйне ыттисем хушшинче чи лайăххи тесе шутланă, ертӳçĕ пулма никама та мар, хăйне суйласси пирки шухăшланă. Анчах вĕсенчен пĕри те кăнтăрпа çурçĕр ăçта вырнаçнине те тĕлленмен. Колхозăн лаша витии хăш вырăнта ларнине, сĕлĕ валашки ăçтине вара кашниех лайăх чухланă. Кур-ха эсĕ: кашниех ертӳçĕ вырăнне хăй çеç йышăнасшăн, кама та пулин урăххине лартас тенĕ шухăша яхăнне те ярасшăн мар вĕт.

Все тексты взяты из открытых источников и выложены на сайте для не коммерческого использования. Все права на тексты принадлежат только их правообладателям.